

# *Районăн харсăр çыннисем*



Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

# Халăх культурине упраса, аталантарса...

**Юлашки çулсенче Тăрмăш ял тăрăхĕнче кулленхи пурнăç условийĕсене лайăхлатас енĕпе калăпăшлă ĕçсене пуçаруллă бюджет меслечĕпе пурнăçлаççĕ. 2019 çулта Тăрмăшра кану скверĕ хута кайнă. Малашне унта ял уявĕсем, ытти культурăллă-массăллă мероприятисем те ирттерме меллĕ пулнине палăртаççĕ ял çыннисем. Урамсенче çутă перекетлекен лампăсем çунаççĕ, ача-пăча валли ятарлă лапамсем янтăлаççĕ. Анчах çынна чун апачĕ те кирлĕ вĕт-ха. Ку енĕпе ялти культура çуртĕ ватти-вĕттине хăй патне йыхравлать, кăмăл-туйăма ăшăпа, хăтлăхпа çупăрлать.**

**Раççей Президенчĕ Владимир Путин культурăна, вăл хальхи обществăн тĕп сферисенчен пĕри пулнине кура, уйрăм наци проекчĕ пек уйăрса палăртрĕ. «Эпир çĕршывăн культура пурнăçĕнче Чăваш Ен паллă вырăн йышăнса тăнипе мухтанатпăр, Пĕтĕм Раççейри тата тĕнчери фестивальсемпе конкурссенче тăван республикăн ăс-пурлăхĕпе паллаштаракан пултарулăх коллективĕсен çитĕнĕвĕсемшĕн савăнатпăр»,–терĕ Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев культура ĕçченĕсене уявпа саламланă май.**

**Хăйсен пархатарлă ĕçĕпе наци культурин чи лайăх йăли-йĕркисене сыхласа упрама, сумлăн малалла аталантарма пулăшакансен йышне районти «Тăрмăш» халăх фольклор ушкăнне кĕртнĕ пулăттăм. Кунти культура çуртĕнче çавăн пекех драма, ташă, ал ĕç, халăх инструменчĕсен кружокĕсем – пурĕ 20 тĕрлĕ формировани – аван ĕçлесе пыраççĕ.**

## Кунта урăхла пулма та пултараймасть

Ялта пурăнакансем мĕн авалтан юрласа чунĕсене пусарнă. Ĕçленĕ чухне те, вăйăра та, улахра та, ĕçкĕ-çикĕре те шăрантарнă. Кашни юрринчех халăх шухăш-кăмăлĕ, туйăмĕ палăрнă. Пурнăçĕ çăмăл пулманран хурлăхлисем те сахал мар. Вĕсенче тăвансемпе пĕрле пурăнасси, атте-аннене хисеплесси, ватăсене сума сăвасси, тăван çĕре хакласси те малти вырăнта тăнă. Вĕсем ламран лама куçса пырса паянхи кунччenex сыхланса юлнă. Ахальтен мар тăван тăрăхри юрăсем «Тăрмăш» фольклор ушкăнĕн репертуарĕнче тĕп вырăн йышăнаççĕ. Ĕлĕкренех юрă ăстисемпе пуян пулнăран та-ши, хăйсен кун-çулне культурăпа, искусствăпа çыхăнтарнă чылай талантлă çын тухнă Тăрмăшран: сăмахран, Чăваш халăх артисчĕ Николай Дмитриевпа ЧР халăх артисчĕ Сергей Иванов, Александр Васильев, Николай Казаков, Юрий Григорьев композиторсем, Николай Суракинпа Эдуард Табаев юрă кĕвĕлекенсем, Владимир Разин художник тата ыттисем те. Илеме туякан, кĕвĕ-çемĕ тĕнчине çывăх тăракансен йышĕнче ялти «Тăрмăш» халăх фольклор ушкăнĕн ертӳçи Елена Николаевна Матросова палăрса тăнинчен тĕлĕнмелли çук темелле. Кунта урăхла пулма та пултараймасть.

**КĔСКЕ СПРАВКА**

**Е.Н.Матросова 1981 çулта Шупашкарти Ф.Павлов ячĕллĕ музыка училищинчи вокал уйрăмне вĕренсе пĕтернĕ. Консерваторие те кайма май пулнă, анчах районти культура пайĕн ертӳçи Н.П.Петрова ялти халăх хорĕпе ĕçлеме чĕнсе илнĕ ăна. Вăл вара килĕшнĕ. Кӳршĕ ял каччипе Николай Михайловичпа çемье çавăрнă. Ялти хорпа тĕрлĕ фестивальсемпе смотрсене хутшăннă, малти вырăнсене йышăннă. Елена Николаевна аслă пĕлӳ илес тĕллевпе И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне вĕренме кĕнĕ. Кĕçĕн класри ачасен вĕрентекенĕ специальноçа илсе шкулта 33 çул тăрăшнă, çав шутран 10 çулне – аслă пионервожатăйра тата музыка шкулĕнче. 23 çул ачасене пĕлӳ панă. 1989 çулччен культура çуртĕнче те ĕçленĕ.**

## «Хĕлхеме» çĕнĕрен чĕртсе

Ялта иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулсен вĕçĕнче клубра тĕрлĕ професси çыннисенчен тĕлĕнмелле хор йĕркеленнĕ. вăл пултарулăхĕпе республикăра палăрнă. Халăх хорĕ 1954 çулта Мускавра Кремльте чăваш юррисене шăрантарса нумай çынна тĕлĕнтернĕ. 50 çынтан тăракан ушкăна Нил Дмитриевич Казаков (Чăваш филармонийĕн директорĕн Николай Казаковăн ашшĕ) ертсе пынă.

Каярахпа «халăх» ятне Тăвайне куçарнă. Культура çурчĕ, 10 çул хутса ăшăтманран, «юхăнма» пуçланă. 2004 çулта



♦ "Тăрмăш" халăх фольклор ушкăнĕн ертӳçи Е.Н.Матросова

кунта отставкăри майор Николай Михайлович Матросов ĕçлеме пуçланă. Елена Николаевна мăшăрĕшĕн яланах сылтăм алли вырăнĕнче пулнă. Каярахпа хăй те çур ставкăпа ĕçе вырнаçнă. Культура çурчĕ хĕмленсе ялкăшма пуçланă. Шăпах çав вăхăтра ялти юрă ăстисенчен «Çăлкуç» фольклор ушкăнĕ чăмăртаннă.

«Республика шайĕнчи конкурссене хутшăннă май, «Çăлкуçсем» чылайăшне асăрхарăмăр. Пĕр шухăшлăн ушкăна «Тăрмăш» ят парас, капла ниçта та çухалса каймăпăр, терĕмĕр,–аса илчĕ Е.Матросова. – 2013 çулта ушкăна «халăх» ят парса чысларĕç. Ун хыççăн икĕ хутчен хамăр пултарулăха кăтартса, хисеплĕ ята çирĕплетрĕмĕр».

Районта кăна мар, республикăра та палăрнă коллектив ĕçĕ-хĕлĕпе Чăваш Енри массăллă информаци хатĕрĕсен журналисчĕсем интересленме пуçлаççĕ. Радиотелекăларăмсенче те янăраççĕ «Тăрмăшсен» юррисем. Нумаях пулмасть «Хыпар» хаçат журналисчĕ Н.Смирнова ялти фольклор ушкăнĕ, унти паллă ал ĕç ăстисем çинчен статья пичетленĕччĕ.

Районти ялсенче час-часах пулать коллектив. Канаш, Комсомольски, Красноармейски, Вăрнар, Шупашкар, Çĕрпӳ, Вăрмар, Йĕпреç, Шăмăршă районĕсенчи фестивальсенче Тăвай енри халăхăн йăла-йĕркисемпе паллаштарнă, концертпа та çитнĕ кӳршĕсем патне. Инçе çула тухнă чух хăйсен транспорт çуккипе тара тытма тивет. Тепĕр чухне спонсорсем пулăшаççĕ-ха. Кунти артистсем хăйсем те пуçĕсене усса лараканнисем мар. Сăмахран, ялти туйсене илемлетме хутшăнаççĕ.

Туй матки – туй илемĕ, хушпу-сурпан тăхăннă маттур хĕрарăмсене хĕр илме илсе каяççĕ, чăваш туйне туллин кăтарса чи асра юлмалли кун туса параççĕ çамрăк мăшăрпа тăванĕсене. Çапла тухса çӳремелĕх кăштах ĕçлесе илеççĕ. Ялти сумлă ватăсене юбилейпе саламлама та хутшăнать фольклор ушкăнĕ. Укçалла тесе ан шутлăр, хăйсем асăнмалăх парне парса кăмăл-туйăмне çĕклеççĕ.

Фольклор ушкăнĕн хаклав сунтăхĕ тĕрлĕ ĕç-хĕлсенче палăрнăшăн тивĕçнĕ наградăсемпе пуян. Хăш-пĕр мероприятисене хутшăннисене кăна аса илер-ха: Пĕтĕм чăвашсен акатуйĕ (2008-2018 ç.ç.), халăх пултарулăхĕн «Çĕнтерӳ салючĕ» (2009-2010), Пĕтĕм Раççейри «Раççей çăлкуçĕсем» (2011-2014), «Туслăх кăшăлĕ» республикăри, И.Вдовина ячĕпе иртекен регионсен хушшинчи фестивальсем (2016-2018) тата ыт.те.

## Чĕмпĕрте, Самарта, Çĕпĕрте...

«Тăрмăш» халăх ушкăнĕ аякри тăвансемпе те çыхăнăва çирĕплетсех пырать. Ĕлĕкхи юрăсен сăмахĕсемпе кĕввисене çитереççĕ вĕсем патне. Хамăр тăрăхри чăваш çи-пуçĕсемпе паллаштараççĕ. Чĕмпĕрти «Туслăх кĕперĕ» фестивальте, Тутарстанра халăх юррисемпе тыткăнланă йăхташĕсене. Санкт-Петербургра та хапăл пулнă вĕсене.

Самарта иртнĕ «Кĕр сăри» фестивале хутшăнни халĕ те кашнин асĕнчех пулĕ. Сим пыллă та кăпăклă чăваш сăрипе сăйланă, техĕмлĕ шăрттан, тултармăш, чăкăт-пӳремеч, хуплу, кăмакара пăшăхланă хур, сысна хырăмлăхĕнчен хатĕрленĕ çавăрмăш, студень тата тĕрлĕ наци апат-çимĕçĕ хатĕрленĕ тăрмăшсем курав сĕтелĕ валли. Чăвашсен юрри-ташшисене, хăш-пĕр уявсен йĕркисене сцена çинче кăтартнă, ал ĕçĕсенчен хатĕрленĕ чаплă выставкăпа тĕлĕнтерсе хăварнă. Жюри пысăк хак панă тăрмăшсен пултарулăхне. Венера Николаеван тĕрриэрешĕпе, чăваш тумĕллĕ пуканисемпе чылайăшĕ кăсăкланнă. Зойăпа Нина Семеновасем хăйсем хатĕрленĕ хушпу-тухйисемпе, масмаксемпе, мăй çаккисемпе, çыхнă шăрçасемпе килентернĕ курма пынисене. «Сирĕнтен вĕренмелли нумай, килсех çӳрĕр»,– тесе ырă кăмăлпа ăсатнă самарсем тăвайсене.

Иртнĕ çул «Тăрмăшсем» Кемĕр облаçĕнчи чăваш ялĕсенче пултарулăхĕпе паллаштарнă. Аякри тăвансемпе хальхи тата авалхи юрăсене пĕрле юрланă, ташланă. Тăвай енрен кайнă тăванĕсем аван пурăннине курса савăннă. Культура çурчĕсем çĕнĕ, хăтлă. Чăвашла таса та илемлĕ калаçаççĕ. Хамăр енчи хĕрарăмсен тумĕсемпе, капăрлăхĕсемпе паллаштарнă, вĕсене парнелесе хăварнă. Лачкассинчи Венера Николаева вара мĕнлерех ăсталамаллипе мастер-класс ирттернĕ.

## Кашнин тӳпи пур

2012 çулта модернизаци программипе килĕшӳллĕн культура çуртĕнчи оборудованисемпе сцена çине тухмалли тумсене çĕнетнĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн япалисем те кивелеççĕ, вĕсене çĕнетсе тăмалла. 2019 çулта ялсен территорийĕсенчи культура учрежденисене хăтлăлатмалли конкурсра Тăрмăшри культура çурчĕ те палăрнă. Тивĕçнĕ укçа-тенкĕпе музыка аппаратурипе пĕрле çутăпа ĕçлемелли хатĕрсем, параппанпа халăх инструменчĕсенчен хăшне-пĕрне илме май килнĕ. Баян туянасшăн пулнă, анчах укçи-тенки çитмен. «Тăрмăш» ушкăн çумĕнчи «Туслăх» ансамбль хĕрĕсем баянпа юрлама юратаççĕ иккен. «Баянисчĕ пур – баянĕ çук, фольклор ушкăнĕ пур – инструменчĕсем çук»,– шӳтлесе илеççĕ тепĕр чух юрăççсем.

Чăнах та ĕнтĕ музыка инструменчĕсем те тахçанхисемех: кам килтен илсе килнĕ е парнелесе хăварнă. Мĕн пуррисемпе выляса хавхаланаççĕ çапла. Ял тăрăхĕн пуçлăхне Венера Николаевана купăс илсе панăшăн тав тăваççĕ тăван культура еткерлĕхне упраса аталантарассишĕн тимлекенсем. Николай Павлович Петров питĕ çĕкленӳллĕн калать унпа. Малашне аванрах пулать ĕнтĕ ĕçлеме. Хальтерех кăна хитре тĕрĕллĕ шурă тĕслĕ кĕпесем çĕлеме заказ панине пĕлтерчĕ Елена Матросова. Пĕлтĕр республикăри конкурса хутшăнса Тăрмăшри культура çурчĕ «Чăваш Енри чи лайăх культура учрежденийĕ» ята тивĕçнĕ, 175 пин тенкĕ парса хавхалантарнă уншăн. Çак укçапа 15 хĕрарăм тата икĕ арçын кĕпи çĕлеттересшĕн.

«Çак çитĕнӳ те, паллах, культура ĕçченĕсемпе пĕрле фольклор ушкăнĕнче юрлакан маттурсем тăрăшмасăр пулман, кунта пурин те тӳпи пур»,– тет Елена Николаевна.

## Пĕр çемьери пек

Халĕ коллектива 16-20 çын çӳрет, тепĕр чухне йыш 30 çын патнелле те çывхарать – ӳсĕмĕпе 12 çултан пуçласа 80 çулхи таранччен. Пĕр туслă çемьене аса илтерет «Тăрмăш» халăх фольклор ушкăнĕ. Кашнин пирки ăшă сăмахсем каларĕ унăн ертӳçи.

Акă, Лачкасси ялĕнчен виççĕн çӳреççĕ юрлама: Венера Николаева, Ирина Зво-

нарева, Зоя Семенова. Вĕсем юрă ăстисем кăна мар, ал ĕç маçтăрĕсем те. Виçĕ çухрăм ытла çурран килеççĕ, утни хамăршăн, теççĕ маттурсем. Чăваш юрри-кĕввисене юратни, ырă йăла-йĕркене хисеплени вăй парса пырать вĕсене. Оля Федотова та пĕрле çӳретчĕ-ха çав ялтан, Канашра пурăнма пуçланă хыççăн та пирĕн туслă çемьерен уйрăлмарĕ хастар хĕрарăм.

Ушкăн вăйăçи Николай Петров – питĕ пултаруллă, хăй тĕллĕн вĕренсе алла илнĕ тĕрлĕ музыка инструменчĕсене: баянпа та, купăспа та юрлаттарать ялти артистсене. 71 çулта пулсан та, харсăрлăхĕпе пĕр-пĕр çамрăкран иртерет. **«Сывлăх пур чухне çӳресчĕ-ха, коллективпа пĕрле пуласчĕ-ха, капла çулсем иртнине туймастăн. Çамрăксене ытларах явăçтарасчĕ, тăван халăхăн культурине вĕренсе пыччăр»**,– тет Николай Павлович.

Людмила Семенова хĕрĕпе Надеждăпа пĕрле çӳренĕ. Надеждăн сасси хитре, конкурссенче малти вырăнсене йышăннă. Халĕ вăл – студентка, юрист пулма хатĕрленет. Кирлĕ вăхăтра яланах пулăшма хатĕр аслисене. Килте выльăх-чĕрлĕхне те чылай усраççĕ пулсан та нихăçан та: «Паян юрлама пыраймастăп», – тесе каланине илтмен ултă ача амăшĕнчен Людмила Андреевнаран. Вăл аслă пĕлӳллĕ выльăх тухтăрĕ, кӳршĕ ялта ĕçлет пулсан та ялти çемьесене кирлĕ чухне пулăшма васкать.

Галина Табаева – ансамблĕн шăпчăк сассиллĕ солистки. Уйрăм юрласа конкурссемпе фестивальсенче малти вырăнсене йышăнать. Галина Пантелеймоновна – пилĕк ача амăшĕ, аслă пĕлӳллĕ зоотехник, мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен Ленин ячĕллĕ колхозра вăй хунă. Хăйĕн пултарулăхне ӳстерме май тупатех, репетицисене сиктермесĕр çӳрет. Ывăлĕ Эдуард Табаев юрăсем кĕвĕлет, кинĕ Алена Алексеева та хитре саслă юрăç.

Светлана Спиридонова юрă-ташăра та пултаруллă, спектакльсенче те тĕрлĕ рольсене ăста кăларать. Вăл – ял тăрăхĕн депутачĕ. Мăшăрĕпе Вадим Владимировичпа икĕ хĕр çитĕнтернӗ, асли Ангелина спектакльсенче те вылянă, фольклорта та юрланă. Мăшăрланнă, ывăл çитĕнет, Мускавра пурăнаççĕ. Ангелинăн мăшăрĕ Орловран, кĕрӳ енчисем чăн чăваш туйне курасшăн пулнă. «Тăрмăш» ушкăнпа чăваш туйне вырăнти йăла-йĕркепе кăтартнă. Хĕрне туй арăмĕсемпе туй юрри юрласа, ташласа кайса илнĕ, питĕ килĕшнĕ пирĕн енчи туй йăлассене.

Нина Семенова купăспа вылять, юрлаттарса ташлаттарать çеç мар, авалхи юрăсене тупса вĕрентет. Нина Григорьевна ал ĕç ăсти те, коллективри артистсем валли хушпу-тухья, ум çаккипе тĕрленĕ сăмса тутрисем таранах хатĕрлетчĕ. Малтанхи вăхăтра фольклор ушкăнне вăл тумлантарнă, кайран вара хуларан яла килнĕ Венера Николаева хутшăннă чăваш хĕрарăмĕн çи-пуçне ăсталама. Халĕ артистсен хитре çи-пуçĕсемшĕн иккĕн тимлеççĕ.

Татьяна Ялугина – хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи, ял тăрăхĕн депутачĕ тата вĕсен ертӳçи, хĕрĕх çула яхăн хирурги сестринче ĕçленĕскер, фольклор ушкăнĕн «васкавлă пулăшăвĕ» вырăнĕнчех. Ывăлĕ Алик та çамрăклах фольклор ушкăнĕпе туслашнă, халĕ Мускава ĕçлеме çӳрет пулсан та çемьепе те, пĕччен те хитре юрăсем шăрантараççĕ.

Любовь Агафонова профессийĕпе медсестра, Канашри больницăра тăрăшать, ушкăн чăмăртаннăранпах пĕрле, хитре сассипе килентерет, спектакльсенче тĕрлĕрен рольсене калăпласа çынсене савăнтарать.

Алена Иванова больницăра та, культура çуртĕнче те ĕçленĕ, халĕ Мускава ĕçлеме çӳрет, фольклор коллективĕнче малтанхи тапхăртанпах, Оксанăпа Ольга хĕрĕсем те фольклорта юрласа ташланă, бисерпа тĕрлĕрен хитре япаласем те тĕрлеççĕ, çыхаççĕ.

Любовь Андреева библиотекарь хӳхĕм юрлать, концерт программисене çыпăçуллă ертсе пырать. Хĕрĕ Дарина та пĕрлех, вĕсем Лев Матросовпа еплерех илемлĕ юрăсем янратаççĕ.

Аркадий Антонов малтан Çĕпĕрте ĕçленĕ, яла таврăнсан фольклор ушкăнĕпе çывăхланнă. Унăн ашшĕ Алексей Антонов та хăй вăхăтĕнче Тăрмăш халăх хорĕпе пĕрле Мускаври Кремльте юрланă, Аркадий Алексеевичăн сасси вăйлă та уçă, ашшĕнни пекех. Вăл тăхăннă кĕпепе тухать сцена çине.

Анна Прокопьева та яланах ырă канашсемпе пулăшма хатĕр. Вăл ушкăн йĕркеленнĕ чухнех çӳренĕ. Унăн ашшĕ Анатолий Сергеевич чи хастаррисенчен пĕри пулнă, мăнаçлă сассипе чуна тыткăнланă, спектакльсенче кирек мĕнле роле те пултарнă.

Валерий Макаров халăх хорĕнче пулнă, халĕ халăх фольклор ушкăнĕнче юрлать. «Ылханнă йăх» драмăра Кирук, «Кай, кай Ивана» спектакльте Иван, «Ялта» драмăра Çтаппан, «Хаврук инке сывалать» сценкăра Миша, «Пире кун пекех парне кирлĕ мар» сценкăра Чĕре тата ытти рольсене калăпланă.

Владимир Кузьмин – чăн-чăн артист. Сцена ăсталăхĕпе тыткăнлатчĕ куракансене, сасси уçă та янăравлă унăн. Халĕ чире пула хутшăнаймасть мероприятисене.

Александр Васильев та кăмăлтан çӳрет ансамбле. **«Чăваш юррисене юрласан чун канать, çĕкленет»**,–тет пушар чаçĕнче ĕçлесе канăва тухнăскер. Ĕçри çитĕнӳсемшĕн медальпе те чысланă ăна.

Олеся Петрова Канашри педучилищĕре музыка уйрăмне пĕтернĕ. Халĕ иккĕмĕш ачипе декретлă отпускра. Ăна та чăтăмсăррăн кĕтеççĕ коллективра.

Ушкăна Андрей Федоров хастар çамрăк хушăннă. Пултаруллă каччă конкурссене хутшăнать, сценкăсенче вылять, музыка аппаратурипе те ĕçлеме ӳркенмест. Канашри педколледжра пĕлӳ пухаканскер программист пуласшăн.

Фольклор ушкăнĕнчи чи асли – Валентина Дмитриева. «Бабуля»,–тесе хисеплесе чĕнеççĕ ăна коллективра. Нумаях пулмасть ăна 80 çулхи юбилейĕпе саламланă. Маттур-ха Андреевна, юрлама-ташлама кăна мар, ял уявĕсенче, ытти тĕрлĕ мероприятисенче кăпăклă сăрапа, тутлă кукăльпе сăйлать.

Венера Николаева çамрăк чухне 10 çул республикăри П.Хусанкай ячĕллĕ Культура керменĕнче спектакльсенче вылянă. Сăвăсене епле илемлĕ вулать тата! СССР халăх артистки Вера Кузьмина ячĕпе иртекен конкурсра темиçе хутчен те пĕрремĕш вырăн йышăннă. Ал ĕçĕсене тĕрлĕ куравсене тăратса мала тухнă. Кăçал тĕп хулари Туслăх çуртĕнче республика шайĕнчи наци тумĕсен фестиваль-конкурсĕнче палăрнă.


♦ ЗАГС пайĕнче Матросовсене чысланă самант

Сăмах май каласан, Е.Матросова çав конкурса кукамăшĕн 1896 çултан сыхланса юлнă кĕпине çĕнетсе, сурпантан майлаштарса çĕленĕ чĕрçиттине, сурпанпа хушпу, ум çаккисем тăратнă. 1 степеньлĕ Лауреат дипломĕпе чысланă ăна.

## Ачисем те юрă-çемĕпе туслă

Фольклор ушкăнĕнче чи çамрăккисенчен пĕри – Лев Матросов, Елена Николаевнан мăнукĕ, Тăрмăш шкулĕнче пĕлӳ пухать, Тăвайри музыка шкулĕнче ăсталăхне ӳстерет. Алексей ывăлĕ те яланах амăшне хавхалантарса пырать. Вăл та музыка енĕпе ятарлă аслă пĕлӳ илнĕскер, пĕр хушă ялти культура çурчĕн директорĕ пулнă. Халĕ Шупашкарта пурăнаççĕ çемйипе, Кристина мăшăрĕпе икĕ хĕр пĕрчи ӳстереççĕ. Миша ывăлĕ Канашри пушар чаçĕнче вăй хурать, çемьеленнĕ, икĕ ывăл çитĕнтереççĕ Алена мăшăрĕпе. Амăшĕ пекех юрă-кĕвĕ тĕнчине çывăх, пултарулăх конкурсĕсенче коллектив чысне хӳтĕлет. Николай Михайловичпа Елена Николаевнан Марина хĕрĕ халĕ Тăрмăшри культура çурчĕн ертӳçинче тăрăшать, вăл та музыка енĕпе пĕлӳ илнĕ. Çемьере пĕр-пĕрне ăнланса та пулăшса пынипе яланах килĕшӳпе çураçулăх хуçаланать.

## Режиссерĕ те хăех

–Елена Николаевана, ăçтан пур çĕре те ĕлкĕретĕр эсир? Тĕрлĕ районсене, регионсене çула тухатăр. Хамăр тăрăхри пĕр пысăк мероприяти те «Тăрмăш» ансамблĕн юрри-ташшисĕр иртмест. Шупашкарти курав-конкурссенче те «Тăрмăш» ушкăн, унăн хастар артисчĕсем çĕнтерӳçĕ Дипломĕсене тивĕçеççĕ. Мĕнле мехел çитеретĕр? Район, республикăри хаçатсемпе те çыхăну тытма вăхăт тупатăр. «Ял ĕçченĕн» кăçалхи 85 çулхи юбилейĕнче хăвăр енчи халăх юррине хӳхĕм шăрантарса саламларăр.


♦ Тутарстанри "сапантуй" уявĕнче

– **Юрласан, кăмăл уçăлать. Ял тăрăхĕн администрацийĕпе, унăн пуçлăхĕпе Вероника Васильевнапа килĕштерсе ĕçлесе тĕрлĕ мероприятисем пуçарса йĕркелетпĕр. Уяв хыççăн çынсем килĕсене кăмăллăн саланни ĕçе çĕнĕлĕхсем кĕртме хистет тата илемлĕрех тăвас килет. Кӳршĕллĕ ялсенчи пуçлăхсем те сыхăну тытаççĕ пирĕн артистсемпе. Юлашкинчен нарăс уйăхĕнче вĕсем ыйтнипе Шаккăл ялĕнчи халăха концертпа савăнтартăмăр. Мăн асаттесен ырă йăли-йĕркисене сыхласа хăварассипе районти культработниксемпе пĕрлехи проектсем хатĕрленине асăнса хăвармалла. Чи пысăк телей – çемье юнашар пулни. Çумра ăнланакан мăшăр пурри пĕтĕм йывăрлăха çĕнтерме пулăшать.**

–Елена Николаевна, мĕн тери ырă та ăшă сăмахсемпе сăнларăр фольклор ушкăнне çӳрекенсене. Тата хăвăр та спектакльсенче пысăк театрсенчи артистсем пекех вылятăр.

–Сцена çинчи ĕç-хĕл пирки калас пулсан, спектакльсенче выляма та, лартма та юрататăп. Шупашкарта вĕреннĕ чухне халăх театрне çӳреттĕм. «Аптраман арăмсем» (Лида), «Анисса» (Анисса) спектакльсене чăваш телевиденийĕпе те кăтартнă. 1982 çулта Тăрмăшри культура çуртĕнче П.Осиповăн «Ылханлă йăх» драмине лартма 48 çын хутшăнчĕ. Эпĕ тĕп роле Аниссана вылярăм. Чăваш телевиденийĕ ӳкерсе илчĕ. Комисси членĕсем Вера Кузьмина, Геннадий Терентьев, Николай Степанов артистсем пысăк хак паннăччĕ. 1984 çулта Тăрмăш шкулне ĕçлеме куçрăм. Каярах шăпа пурпĕрех культура ĕçне илсе çитерчĕ,–калаçăва тăсрĕ «Тăрмăш» халăх ушкăнĕн ертӳçи. – 2008 çулта Ф.Павловăн «Ялта» драмине лартрăмăр, 46 çын тухрĕ сцена çине. Автобус е машина тытса ялсем тăрăх гастроле çӳренĕ. Ун хыççăн «Хаврук инке сывалать», «Кай, кай Ивана», «Таня», «Пире кун пек парне кирлĕ мар», «Туй икерчи» спектакльсем, иртнĕ çул «Тăхлачăсем», «Туссем», «Пурлăха мĕнле пайламалла» сценкăсем кăлартăмăр куракансем умне. Пĕтĕм ĕçхĕле каласа пĕтерейрес çук. Сăмах майăн, хамăн вĕрентекене, ĕç наставникне А.Д.Дмитриева тав сăмахĕ калас килет.

Елена Николаевна уçă кăмăллă çын. Унпа калаçнă хыççăн ыррăн туятăн, чун-чĕре уçăлать. Çавăнпа пур ӳсĕмрисемпе те пĕр чĕлхе тупать вăл.

**«Фольклор ушкăнĕпе пĕрле ачасем сцена çине чăваш тĕрри-эрешĕллĕ тум тăхăнса, юрласа-ташласа тухсан чун мăнаçланать. Пирĕн ĕç-хĕле малалла тăсакансем пулсан чăвашлăх пĕтмĕ**,– тет Чăваш Республикин культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Елена Матросова. – **Аваллăхсăр – малашлăх çук, паллах. Хамăр несĕлсенчен сыхланса юлнисене шанчăклăн упраса малалла аталантарассине тĕп тивĕç вырăнне хурать пирĕн ушкăн»**.

Р.ШУМОВА.